Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

93 (7410) № ✻ Эрне кун, 2006 çулхи ноябрĕн (чÿк) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ыран – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире пурсăра та Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Ку уяв наци килĕшĕвне тата общество пĕрлĕхне кăтартса парать, эпир пĕрле пулсан кăна вăйлă пулнине пĕлтерет. Халăхра ахальтен каламаççĕ: «Пĕрлешÿре – вăй». Авалтанпах чăвашсен «ниме» традицийĕ умри йывăрлăхсене ăнăçлă татса пама май панă.

Пĕрлехи вăйпа эпир паян республикăна малашлăх çулĕпе аталантарса пыратпăр. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш Республики – Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем хушшинче тăнăçлă аталанса пыраканнисенчен, Раççейĕн регионĕсемпе тата паллă организацисемпе çыхăнусем тытаканнисенчен пĕри.

Тунă çитĕнÿсемпе килĕшсе тăрасси пире тивĕçтермест. Чăваш Республики умĕнче татах та анлă та интереслĕ задачăсем тăраççĕ. Вĕсене татса пани вара пирĕн республикăна татах вăйлăрах, мал туртăмлăрах тума, çынсен пурнăç шайне хăпартма май парĕ. Эпир пĕрле пулсан палăртнă чикĕсене çĕнсе илессе шанса тăратăп.

Сире, хаклă ентешсем, çирĕп сывлăх, ăнăçусем, килĕшÿпе телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**
**МУРКАШ РАЙОНĔН ÇЫННИСЕМ!**

Сире пурне те ноябрĕн 4-мĕшĕ - Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Çак уяв пире Раççей хăйĕн мухтавлă çĕрĕ çинче пурăнакан халăхăн пĕрлĕхĕпе пуянни çинчен тепĕр хут аса илтерет. Ăс-тăн вăйĕ ырри патне, пĕр шухăшлăн малаллах туртăнни яланах çĕнтерÿ патне илсе пырать. Истори те çакнах çирĕплетсе парать. Ку паян та çаплах. Çĕршывăмăрăн пуласлăхĕшĕн, хăвачĕшĕн халăхăмăрăн ывăл-хĕрĕсем пурнăçне те шеллемен. Апла пулсан, чăннипех те, пĕрлĕхре – вăй.

Эпир пурте пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнсан, пĕр тĕллевлĕн, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хурсан çеç çĕршывăмăр, апла пулсан районăмăр та вăйлă та тĕреклĕ пулĕ. Кун пек чухне кирек епле йывăрлăха та çĕнтерме, малалла çирĕп утăмсемпе кайма пулать. Паян, пурнăç пире çĕнĕлле ĕçлеме хистенĕ чух, уйрăмах асра тытмалла çакна. Паян пирĕн тĕллевĕмĕрсем пĕчĕк мар: ялсем патне асфальт çул сармалла, ял хуçалăхне ура çине тăратмалла, районта пурăнакансене таса шывпа тивĕçтермелле тата ытти нумай ыйтăва татса памалла. Ăнланулăх, пĕрлĕх малти вырăнта пулмалла пирĕн.

Тăван çĕршывăмăрăн пуласлăхĕшĕн, çирĕплĕхĕшĕн, хамăр район аталанăвĕшĕн, ачасен, мăнуксен пуласлăхĕшĕн малалла та пурте пĕр тĕллевлĕн вăй хурасчĕ, килĕштерсе пурăнасчĕ, пĕр-пĕрне хисеплесчĕ. Вара ĕмĕтсем те пурнăçланĕç, йăлтах йĕркеллĕ пулĕ: çĕршывра та, çемьере те. Пурне те çирĕп сывлăх, килĕшÿ, ăнлану, телей, вăрăм кун-çул сунатăп. Хусанти Турамăшĕ те сире, сирĕн ачăрсене, çĕршывăмăра инкек-синкекрен сыхласа тăтăр, пирĕн пурнăç çулне уçса пытăр.

**Район пуçлăхĕ Ю. А. ИВАНОВ.**

## Лару

# Вулавран пуçланать ăс-хакăл

**Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкне ирттерес енĕпе йĕркеленĕ Канаш октябрĕн 31-мĕшĕнче хăйĕн черетлĕ ларăвне Правительство çурчĕн Пĕчĕк залĕнче ирттерчĕ. Ăна ЧР культура министрĕ Петр Краснов ертсе пычĕ.**

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту ун ĕçне хутшăнакансене уйрăмах кăсăклантарчĕ. Сăмахăм Чăваш Енре ачасемпе çамрăксен "Кĕнекепе – Çĕнĕ çула" вулав фестивалĕ пирки. Питĕ вăхăтлă мероприяти темелле, Раççей хăй вăхăтĕнче чи нумай вулакан çĕршыв пулнă, халĕ, тĕрлĕ çăл куç пĕлтернĕ тăрăх, çĕршывра 30 çула çитмен çамрăксен 50 проценчĕ нимĕн те вуламасть. Кĕнекепе туслашасси ачалăхран килмелле çав. Тен, кая та юлтăмăр-и, çапах та Раççейре çак çивĕч ыйтăва татса парас текенсем те çук мар. Тĕслĕхрен, Социаллă пурнăçпа экономика ăс-хакăл программисен фончĕн президенчĕ Сергей Филатов, вулав фестивалĕн йĕркелÿ комитечĕн ертÿçи Нелли Петкова тата Роспичетĕн периодика пичечĕн кĕнеке кăларассин тата полиграфи управленийĕн пуçлăхĕ Нина Литвинец Шупашкара килсе çитнĕ, лару ĕçне те хутшăнчĕç.

Асăннă фестиваль иртнĕ çул вĕçĕнче Тверь облаçĕнче уçăлнă. Йĕркелÿçĕсем палăртнă тăрăх, ăна асăннă регионта ăнăçлă ирттерме мĕн чăрмантарнăха? Вырăти влаç тивĕçлĕ пулăшайманни. Çак пăтăрмах Чăваш Енре сиксе тухмасса шаннине палăртрĕ Сергей Филатов. Ун шухăшĕпе, пирĕн республика ертÿçисен яваплăхĕ пысăк, пуçланă ĕçе яланах ăнăçлă вĕçлеççĕ. Сергей Филатов та, Нелли Петкова та, Нина Литвинец та вулав фестивалĕ пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕç. Апла эпир те вулакана ун пирки каласа кăтартар. Асăннă фестивалĕн тĕллевĕ: ачасемпе çамрăксем хушшинче кĕнеке вулассине пропагандăласси; ачасене кĕнеке тата информаци культурине çирĕплетесси; ачасене кĕнекепе туслаштармалли майсемпе меслетсене çĕнетесси тата ыт. те.

Фестивале мĕншĕн шăпах пирĕн тăрăхра ирттерме йышăнни пирки Сергей Александрович çапла пĕлтерчĕ: "Чăваш Ен меллĕ вырăнта вырнаçнă. Районсем пĕр-пĕринпе лайăх çул-йĕрпе çыхăннă. Çавна май мероприятисене Тверь облаçĕнчи пек облаç центрĕнче çеç мар, республикăн кашни районĕнче ирттерме май парĕ. Унсăр пуçне çак саманта та шута илмеллех: унăн территорийĕнче 55 наци çынни пурăнать. Çавăн пекех тепĕр самант та пур: 2006 çул Чăваш Енре – Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ. Унăн тĕп тĕллевĕсем те ачасемпе çамрăксен "Кĕнекепе – Çĕнĕ çула" вулав фестивалĕн çул-йĕрĕпе пĕр килеççĕ".

Мĕнле ĕçсем ирттерме палăртаççĕ-ха вулав фестивалĕн эрнинче?

100 ытла мероприяти йĕркелеме шантараççĕ. Вĕсем ытларах шкулсенче, ача-пăча библиотекисенче пулĕç. Кашни района тата тĕп хулари 60 шкула çитсе курма палăртаççĕ. Фестиваль кăçалхи раштав уйăхĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарта уçăлĕ те Мускавран килнĕ тата хамăрăн ача-пăча çыравçисенчен тăракан темиçе ушкăн харăсах темиçе района çула тухĕ. Унашкал тĕл пулусем 90-ран та иртмелле. Кашни ача кĕнекепе туслаштăр тесе хăйсенчен мĕн килнине тума шантараççĕ фестиваль йĕркелÿçисем. Чăн та, пархатарлă ĕç çакă. Пирĕн вара вĕсене ырă сунса тав тумалли тата пулăшмалли çеç юлать.

Ларăвăн иккĕмĕш ыйтăвĕ аслă вĕренÿ заведенийĕсенче çамрăксене кăмăл-сипет, ăс-хакăл енĕпе воспитани парасси мĕнле шайра пулнине тишкерессипе çыхăннă. Ку енĕпе Чăваш патшалăх университечĕн воспитани енĕпе ĕçлекен проректорĕ Олег Викторов, Чăваш Патшалăх педагогика университечĕн воспитани енĕпе ĕçлекен проректорĕ Ирина Медведева тата Чăваш патшалăх культура институчĕн ректорĕ Ирина Балкова пĕлтернисене итлерĕç.

## Эсир пĕлесшĕнччĕ

# Çăмăллăхсемсĕр ан юлăр

***"Мана укçа çитет", – тесе кам та пулсан каланине илтнĕ-и эсир? Час-час мар пуль, мĕншĕн тесен ăна мĕн чуль ытларах илетĕн, çавăн чухлĕ нумайрах пĕтеретĕн. Хамăрăн тăкаксене саплаштарас ĕçре вара çĕршыв, республика шайĕнче паракан çăмăллăхсем питĕ пысăк пулăшу параççĕ. Халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассипе çыхăннă мерăсем вĕсем. Тĕслĕхрен, федераллă, республика шайĕнче уйрăм категорине кĕрекенсем çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Е тата çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн паракан субсидие, е уйăхсерен паракан ачасен пособине илер. Чăннипех те, çемье бюджетне йĕркелесе пырас ĕçре çаксем самай пысăк пулăшу параççĕ.***

***Анчах та тепĕр чух çав çăмăллăхсене илме кирлĕ документсене пуçтарма ÿркенетпĕр-ши е урăх сăлтавсене пула, вĕсемпе усă курмастпăр. Иртнĕ ытлари кун Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн социаллă аталану министерствин коллегийĕн ларăвĕнче шăпах халь çеç асăннă çăмăллăхсемпе республикăра епле усă курнине тишкерчĕç. Н. Суслонова министр ку тĕлĕшпе ĕçе лайăхлатмаллине палăртрĕ.***

***Ку тĕлĕшпе пирĕн районта ĕçсем епле пыраççĕ? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хÿтлĕх пайĕн ертÿçинчен Н.П. ПЕТРОВАРАН:***

**– Нина Пантелеевна, чи малтанах уйăхсерен ачашăн паракан пособие тивĕçтересси çинче чарăнар-ха.**

– Каласа хăвармалла, асăннă çăмăллăхпа Чăваш Республикин 2004 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнчи 46-мĕш номерлĕ "Ача пур граждансене патшалăх пособине парасси çинчен" саккунĕпе килĕшÿллĕн тивĕçтеретпĕр. Паянхи куна 2250 çын пурĕ 3868 ачашăн илсе тăрать. Анчах та тÿрех палăртмалла. Асăннă пособие илме май паракан документсене 2046 çын тăратман. Мĕншĕн илмеççĕ вĕсем ачашăн паракан пособие: документсене пĕр сăлтавсăр хатĕрлемеççĕ-и е ниçта та ĕçлемеççĕ, е урăх сăлтав – çакна пĕлес тĕллевпе халĕ вĕсен списокне хатĕрлесе çитерес ĕç пырать. Кунта пире ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен пулăшăвĕ кирлĕ. Халăхри пек каласан, "ача укçине" илекенсен списокне ял тăрăхĕсене тăрататпăр та çакăн сăлтавне пĕлетпĕр. Çак ĕçе ноябрĕн 15-мĕшĕччен туса пĕтермелле пирĕн.

**– Мана пурпĕрех тухмасть тесе алă сулакансем пулĕ-ха вĕсен хушшинче. Ĕç çук ашшĕ-амăшĕсем те çаплах шутлаççĕ пулĕ.**

– Вĕсен те хуçăлса ÿкме кирлĕ мар. Ачан ашшĕ е амăшĕ ĕçлемест пулсан, вĕсен тупăшне вĕсем çинче тăракан çĕр лаптăкĕнчен шутласа паратпăр. Ял тăрăхĕнчен пире шăпах документсем хатĕрлесе паракан çĕр лаптăкĕ мĕн чухлĕ пулнине çирĕплетсе параççĕ. Çавăн пекех мăшăрсенчен хăшĕ те пулин аякка ĕçлеме кайнипе кайманнине çирĕплетеççĕ.

**– Сăмах "ача укçи" илме кирлĕ документсем çине çитрĕ. Тата мĕн пĕлмелле ку тĕлĕшпе?**

– Тÿрех каласа хăварам. Асăннă пособие çемьери тупăш кашни çын пуçне пурăнмалли минимумран пĕчĕкрех пулсан параççĕ. Çавăнпа та çак сумма пурăнма кирлĕ минимумран пĕчĕкрех çемьесен, мăшăрсенчен пĕри ĕçлемест пулсан, пĕрин юлашки 3 уйăхри тупăш çинчен калакан справкăна тăратмалла. Ĕçлемен мăшăрĕн тупăшĕ вырăнне вара килти хушма хуçалăхра илнĕ тупăша шутлатпăр.

Енчен те мăшăрсем уйрăлнă пулсан, пĕрин юлашки 3 уйăхри тупăшĕ мĕн чухлĕ пулнине кăтартакан справкăна тăратмалла. Тепĕр мăшăрĕн тупăшĕ вырăнне вара суд приставĕсен службинчен алимент илменни çинчен калакан справкăна илсе шута кĕртетпĕр.

Тулли мар çемье пулсан вара çакна пĕлмелле. Ашшĕ е амăшĕ ниçта та ĕçлемесен килти хушма хуçалăхри тупăша шутлатпăр.

Палăртмалла, ноябрĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа 16-мĕшĕччен социаллă хÿтлĕх пайĕн специалисчĕсем граждансене паян хускатакан пур ыйтусемпе те вырăнсенче йышăнаççĕ. Хăçан, ăçта тухасси пирки хатĕрленĕ ятарлă графикпа килĕшÿллĕн. Ыйтса пĕлмелли телефон: 2-12-94.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

## Район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕнче

# Пушар хăрушсăрлăхĕшĕн

Хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланчĕ. Çавна май хваттерсенче, ялсенчи уйрăм çуртсенче çурт-йĕре хутса ăшăтма газпа усă курма, газ кĕртменнисем кăмакасем хутма тытăнчĕç. Ку тапхăрта вара тĕтĕм тухмалли устройствăсем, вентиляци каналĕсем, кăмакасен мăрйисем юсавсăр пулнипе пушар тухнă тĕслĕхсем, сĕрĕмпе наркăмăшланса çынсем вилнĕ тĕслĕхсем те сахал мар пулаççĕ. Çавна шута илсе район администрацийĕн пуçлăхĕ октябрĕн 19-мĕшĕнче хăрушсăрлăх нормисене пурнăçлас, пушар тухасран сыхланас тĕлĕшпе 495 № ятарлă йышăну кăларнă.

Район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленине, ял тăрăхĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсене, чикĕллĕ яваплăхлă «Чувашсетьгаз» обществăн «Моргаушрайгаз» филиалне тĕтĕм тухмалли устройствăсене ĕçе кĕртессипе уйрăмах тимлĕ пулма хушнă. Ку ĕçсене ятарлă лицензи илнĕ организацисем кăна туса ирттерме пултараççĕ.

Ял тăрăхĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе предприятисемпе организацисен ертÿçисене тĕтĕм тухмалли устройствăсемпе вентиляци каналĕсене тасатса йĕркене кĕртме ВДПО предприятийĕпе килĕшÿсем тума тата заключенисем илме сĕннĕ.

ВДПО районти канашĕн председателĕн Н.Р. Сидоровăн кирлĕ штатпа ĕç вырăнĕсем хатĕрлемелле. Ку вăл тĕтĕм тухмалли устройствăсем тăвассипе, электроизмерительнăй ĕçсем пурнăçлассипе, йывăç конструкцисене çулăмран хÿтĕлемелли составпа витессипе, пушар сигнализацине вырнаçтарассипе, пушартан хÿтĕленмелли продукци сутассипе, йăлара тата ĕç вырăнĕсенче, çынсем хушшинче пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсемпе пропагандăпа агитаци ĕçне туса пырассипе, ку ĕçе вĕрентÿ учрежденийĕсенчи ачасемпе вĕренекенсем хушшинче туса пырассипе çыхăннă.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене электроизмерительнăй ĕçсем ирттернин итогĕсемпе уйрăм çынсен çурчĕсенче электропроводкăсене улăштарма укçа уйăрассине йĕркелеме, район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайне вĕрентÿ учрежденийĕсенче пушар сигнализацине вырнаçтарса пĕтерсе ăна пăхса тăрассине йĕркелеме, пушар сÿнтермелли хатĕрсемпе тивĕçтерме сĕннĕ. Районти ытти предприятисемпе организацисенче те пушар сигнализацине вырнаçтармалла, огнетушительсемпе тивĕçтермелле.

# Шывсем çинче инкек ан пултăр

Кĕркуннехи тата хĕллехи вăхăтра шывсем çинче инкексем пулассине асăрхаттарас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ октябрĕн 19-мĕшĕнче 494 № йышăну тунă. Ку йышăнупа ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене хăйсен территорийĕсенче шывсем çинчи хăрушă вырăнсене ятарлă паллăсемпе палăртма, хĕлле пулă тытакансем валли вырăнсем уйăрма сĕннĕ. Кунпа пĕрлех пăр çийĕн каçса çÿремелли вырăнсене палăртмалла. Ял çыннисемпе ирттерекен пухусенче ăнлантару ĕçне анлăрах туса пымалла. Вĕрентÿ учрежденийĕсен ертÿçисен те шывсем çинче асăрханусăр пулма кирли пирки ăнлантару ĕçне ирттерессине йĕркелемелле.

## Экономикăпа социаллă аталану

# Çулталăка ăнăçлă вĕçлес тесен

***Çулталăк вĕçленичченех вăхăт нумаях юлмасть. Ăна лайăх кăтартусемпе вĕçлес тесен хальхи лайăх палăрăмсене сыхласа хăварни, çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме мерăсем йышăнни кирлĕ. Пĕтĕмĕшле вара кăçалхи тăхăр уйăхри кăтартусем çаплах.***

**ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ**

Январь – сентябрь уйăхĕсенче пур йышши ял хуçалăх продукцине 885,3 миллион тенкĕлĕх туса илнĕ. Тишкерÿ çакна кăтартса парать. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче пĕтĕм çĕр улмин 65 процентне, пахча çимĕçсен 95 процентне, аш-какайăн 56 процентне, сĕтĕн 73 процентне туса илеççĕ. Анчах та продукцие тирпейлессине е сутассине йĕркелеме майсем сахалрах. Уйрăм хуçалăхсене аталантарма тăхăр уйăхра 682 çынна пĕтĕмпе 104,8 миллион тенкĕ кредит панă.

Ялсенчи кăткăс экономика лару-тăрăвне татса пама хальхи вăхăтра кооператив пĕрлешĕвĕсен пысăк майсем пур. Потребительсен кооперативĕсене финанс тĕлĕшĕнчен пулăшса пыма ятарлă программăсем йышăннă. Хальхи вăхăтра район территорийĕнче кун пек икĕ кооператива регистрациленĕ, тепĕр виççĕшĕ регистраци валли документсем тăратнă. Вырăнсенче кооперативсем йĕркелессишĕн тата ял çыннисене ĕçпе тивĕçтерессишĕн ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем тÿреммĕн ответлă пулса тăраççĕ.

Кашни хуçалăх çитес 2-3 çул валли ял хуçалăх производствине аталантарассипе туса ирттермелли ĕçсен конкретлă планне йышăнма тивĕç. Кунта организаципе право формисене çĕнетсе улăштарасси, продукци туса илессин специализацийĕ, сахал çынсемпе производствăна тытса пымалли технологисене ĕçе кĕртесси, заем тата кредит ресурсĕсемпе тĕллевлĕ усă курасси кĕреççĕ.

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне ял хуçалăх продукцине туса илесси «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, «Свобода», «Ударник», «Оринино», «Восток» хуçалăхсенче районăн вăтам кăтартăвĕнчен пысăкрах. Ильич яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., «Лидер», «Волга» хуçалăхсенче усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне продукци туса илессине, пĕлтĕрхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ÿстерме пултарни те – лайăх палăрăм. Ку енĕпе кăтартусем чи пĕчĕккисем шутĕнче «Нива» агрофирма тата «Нива» ООО, «Хлебороб» тата К. Иванов яч. хис., «Агроурожай» тата «Колос» хуçалăхсем.

Турай, Мăн Сĕнтĕр, Ильинка, Çатракасси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен асăннă предприятисен ертÿçисем кирлĕ пек ĕçлеме пултарайманни пирки тивĕçлĕ пĕтĕмлетÿсем тумалла, çĕре унпа эффективлă усă куракансене памалла.

**Выльăх-чĕрлĕх** продукцийĕ туса илессинче лайăх еннелле улшăнусем пур. Аш-какай туса илесси отчетлă тапхăрта иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 16 процент ÿснĕ. Кăтартусем татах та сумлă пулмаллаччĕ. Шел пулин те, «Хлебороб» хуçалăхра аш-какай туса илессине 64 процент, «Нива» хуçалăхра 41 процент, К. Иванов яч. хис. хуçалăхра 25 процент чакарнă. Пур хуçалăхсем те ку енĕпе районăн вăтам кăтартăвĕн шайĕнче ĕçлесе пынă пулсан татах 293 тонна аш-какай туса илме е 5,2 миллион тенкĕ ĕçлесе илме май пулĕччĕ.

Малашне вара промышленность производстви çине куçса пымалла, хальхи ферма çурчĕсене реконструкцилемелле. Çапла вара 2008 çул тĕлне аш-какай туса илессине 29 процент ÿстермелле.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).